26-мĕш ӳлĕ тухнă. Халĕ 20 ӳлĕ.

1945
АПРЕЛЬ
20
ЭРНЕКУН
75(6826) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

ПĔтĕм тĕнчери пролетарисем, вĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАСАЧĔ

Колхозсенче электричество станцийĕсем лартас ĕçе вăйлатар!

Халăх хуçалăхĕнче электричество вăйĕ калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать. Хулари канни предприяти, канни станок, канни машина электричество вăйĕпе ĕçлет. Хулари канни ĕçсыннийĕн пурнăçĕ электричествăпа тачă сыхăнса тăрать. Фабрикăпа завод электричество пайĕсĕр ĕçлеме пултараймаççĕ, рабочипе служащи электричествăсăр лайăх пурнăçпа пурăнма пултараймаççĕ. Электричество вăл—пирĕн халăх хуçалăхĕн вăй-хăвачĕ, пирĕн халăх пурнăçĕн никĕсĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ Владимир Ильич Ленин Совет власăн малтанхи сулĕсенчех çапла калани:

«...Тăшмана çĕмĕрсе тăкма пĕр май кăна пур, вăл май—çĕршывăн хуçалăхне, çав шутрах çĕрĕçне те, çĕнĕ техникăлла никĕс çине, кучухнехи шултăра производствăн техникăлла никĕсĕ çине куçарасси пулать. Çакăн пек никĕс электричество кăна пулса тăрать. Коммунизм вăл—Совет власăн тата пĕтĕм çĕршыва электрификацилени пулать...» Çĕршыва электрификацилесен кăна, промышленноçа, хăйуçалăхне тата транспорта кучухнехи шултăра промышленноçăн техникăлăлă никĕсĕ çине куçарсан кăна,—çавăн чухне кăна эшир татăклăнах çĕнтерĕпĕр», тенĕ.

Сталинла пилĕксуллăхсем вăхăтĕнче пирĕн çĕршывăн электричество хуçалăхĕ вăйлăн ӳссе тĕрекленсе пычĕ. Ленин партвă задачăна пурнăçа кĕртес тесе, большевиксен партийĕпе совет халăхĕ пăлăнма пĕлмесĕр ĕçлерĕç. Хуласемпе ялсенче çĕршер те пиншер электростанцисем ӳссе ларчĕç. Пирĕн республикăри хуласемпе ялсенче те халĕ ĕнтĕ вунтшар электростанцисем ĕçлеççĕ, пиншер ĕççынисен килĕсене Ильич ламписем çутатаççĕ.

Анчах вăйлăн ӳссе пыракан халăх хуçалăхĕ электричество вăйне ытларах та ытларах ыйтать. Уйрăмăнах ялхуçалăхне электрификацилес тĕлĕшпе пирĕн вăй тата çине тăрса ĕçлемелле. Социализмлă ялхуçалăхĕ ӳссе пыни, совет ялĕн культури ӳссе пыни, колхозсене организацилепе хуçалăх тĕлĕшĕнчен тĕреклетесси ялти электричество хуçалăхне вăйлатма хушать.

Ялхуçалăхĕнче электричество вăйĕпе усă курни мĕн тери паха пулинине колхозниксем лайăх пĕлсе тăраççĕ. Сăмахран, электричество вăйĕпе усă курса колхоз итемĕсем çинче аван çапсан, вăл ĕçе лаптасемпе усă курса çаппинчен темиçе хут хăвăртрах тума тата тырпул тăкăланассине чакарма пулать. Вăрлăха тасатас ĕç те, электричествăпа усă курсан, хăвăртрах та лайăхрах пулса иртет. Выльăх-чĕрлĕх фермисенче электричество вăйĕпе усă курни выльăх апачĕ хатĕрлес тата выльăха шăварас ĕçе çăмăллатать. Колхозниксен килĕсене, шкулпа больницăна сурчĕсене, ял Совечĕне колхоз правленийĕсене, канцелярийĕсене, ача ясликсемпе садĕсене, клубсемпе вулав çурчĕсене электричество çутипе çутатни ялăн сăнăпатне тĕрлевех улăштарать. Ялта электричество вăйĕпе усă курни ялти производствăна—çăнăх авăртас, кĕрпе тăвас, çу çапас, крахмăлпа патока тăвас тата ытти ĕçсене аталантарса пыма пулăшать.

Çакна шута илсе, ялти электричество хуçалăхне ӳстерес тĕлĕшпе Совет правительстви ялапах тимлĕн тăрăшать. Пуманах пулмасть, СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ялти электрификаци ĕçне аталантарасси çинчен ятарласа постановлени йышăннă.

Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче ялсенче электричество станцийĕсем лартас ĕç чакмарĕ, пачах урăхла, вăл малалла ӳссе пычĕ. Пĕчĕк юханшывсен вăйĕпе усă курса, колхозсем гидростанцисем тума тăрăшаççĕ. Пирĕн республикăри колхозсенче халĕ сакăр электростанци ĕçлет, вĕсен вăйĕпе 25 колхоз усă курать. Республика 25 çул тултарнине палăртса тума хатĕрленсе, нумай колхозсем кăçал татах çĕнĕ станцисем лартма шутлаççĕ, вĕсенчен чылайăшĕ çак ĕçе тытăнăп та ĕнтĕ. Калинино районĕнчи «Сутаала» колхоз электростанци çуртне туса лартнă. Вăрмар районĕнчи колхозсем те ку ĕçе хĕрлĕн тытăннă.

ССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1945 çулхи апрелĕн 17-мĕшĕ.

Çакăн шута илсе, ялти электричество хуçалăхне ӳстерес тĕлĕшпе Совет правительстви ялапах тимлĕн тăрăшать. Пуманах пулмасть, СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ялти электрификаци ĕçне аталантарасси çинчен ятарласа постановлени йышăннă.

Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче ялсенче электричество станцийĕсем лартас ĕç чакмарĕ, пачах урăхла, вăл малалла ӳссе пычĕ. Пĕчĕк юханшывсен вăйĕпе усă курса, колхозсем гидростанцисем тума тăрăшаççĕ. Пирĕн республикăри колхозсенче халĕ сакăр электростанци ĕçлет, вĕсен вăйĕпе 25 колхоз усă курать. Республика 25 çул тултарнине палăртса тума хатĕрленсе, нумай колхозсем кăçал татах çĕнĕ станцисем лартма шутлаççĕ, вĕсенчен чылайăшĕ çак ĕçе тытăнăп та ĕнтĕ. Калинино районĕнчи «Сутаала» колхоз электростанци çуртне туса лартнă. Вăрмар районĕнчи колхозсем те ку ĕçе хĕрлĕн тытăннă.

Çак ĕçе пурнăçа кĕртес тесе, Ленин партвă задачăна пурнăçа кĕртес тесе, большевиксен партийĕпе совет халăхĕ пăлăнма пĕлмесĕр ĕçлерĕç. Хуласемпе ялсенче çĕршер те пиншер электростанцисем ӳссе ларчĕç. Пирĕн республикăри хуласемпе ялсенче те халĕ ĕнтĕ вунтшар электростанцисем ĕçлеççĕ, пиншер ĕççынисен килĕсене Ильич ламписем çутатаççĕ.

Анчах вăйлăн ӳссе пыракан халăх хуçалăхĕ электричество вăйне ытларах та ытларах ыйтать. Уйрăмăнах ялхуçалăхне электрификацилес тĕлĕшпе пирĕн вăй тата çине тăрса ĕçлемелле. Социализмлă ялхуçалăхĕ ӳссе пыни, совет ялĕн культури ӳссе пыни, колхозсене организацилепе хуçалăх тĕлĕшĕнчен тĕреклетесси ялти электричество хуçалăхне вăйлатма хушать.

Ялхуçалăхĕнче электричество вăйĕпе усă курни мĕн тери паха пулинине колхозниксем лайăх пĕлсе тăраççĕ. Сăмахран, электричество вăйĕпе усă курса колхоз итемĕсем çинче аван çапсан, вăл ĕçе лаптасемпе усă курса çаппинчен темиçе хут хăвăртрах тума тата тырпул тăкăланассине чакарма пулать. Вăрлăха тасатас ĕç те, электричествăпа усă курсан, хăвăртрах та лайăхрах пулса иртет. Выльăх-чĕрлĕх фермисенче электричество вăйĕпе усă курни выльăх апачĕ хатĕрлес тата выльăха шăварас ĕçе çăмăллатать. Колхозниксен килĕсене, шкулпа больницăна сурчĕсене, ял Совечĕне колхоз правленийĕсене, ача ясликсемпе садĕсене, клубсемпе вулав çурчĕсене электричество çутипе çутатни ялăн сăнăпатне тĕрлевех улăштарать. Ялта электричество вăйĕпе усă курни ялти производствăна—çăнăх авăртас, кĕрпе тăвас, çу çапас, крахмăлпа патока тăвас тата ытти ĕçсене аталантарса пыма пулăшать.

Çакна

Ç у р а к и у м ĕ н

КĔРХИ ТЫРĂ КАЛЧИСЕНЕ ПĂСĂЛАСРАН СЫХЛАССĔ

МУРКАШ. апрелĕн 19-мĕшĕ (Телефонпа). Мăшăлта пысракан колхозсем кĕрхи тырă калчисене сăнаса тăрассĕ. Чылай колхозсенче юр нумай выртакан вырăнсене кĕл, хăрăм е типĕ тăпра сапассĕ.

Кашмашри «Свобода» колхозăн 5 гектар кĕрхи калчи çинче хулăм юр выртать. Колхозниксемпе колхозницăсем, калчассăне пĕтесрен хăтарса хăварас шутпа, юр нумай выртакан айлăм вырăнсене шăтăксем алтса сывлăш кĕмелле тăвассĕ, час ирĕлсе пĕттĕр тесе, юр çине кĕл сапассĕ. Çак ĕçсене Яраипайкассинчи Ватутин ячĕпе тăракан тата Ориншно ял Советĕнчи «Красное Сормово» колхозсенче та анлăн тăвассĕ.

Пăлăхи кун тĕлне районĕпе 215 гектар клевер акнă, 103 гектар çинчи кĕрхи калчасене апатлантарнă. Клевер акасси тата кĕрхи тырăсене апатлантарасси пур колхозсенче те пуçланчĕ.

Ф. АЛБУТОВ.

КЛЕВЕР АКАССĔ

Етĕрне районĕнчи колхозсем клевер акма тытăннă. «Парижская Коммуна» колхоз 18 гектар, Чапаев ячĕпе тăракан колхоз 25 гектар, Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз 25 гектар, Буденный ячĕпе тăракан колхоз 16 гектар, районĕпе пурĕ 262 гектар клевер акнă. Ленин ячĕпе тăракан колхоз 30 гектар, Буденный ячĕпе тăракан колхоз 16 гектар, «Комсомол» колхоз 6 гектар çинчи кĕрхи калчасене кайăк-кĕшĕк тислĕкĕпе апатлантарнă. Колхозсем 400 пăт ытла сĕрулми яровизацилеме хунă.

Кашни трактормпа 350 гектар сухаламалла

Çак кунсенче Куславкка МТС-ĕнчи трактористсемпе трактористкăсем, комбайнерсемпе машинистсем пĕрлешӳллĕ пухăвĕ пуласа иртрĕ. Вăл пухура Полтава облаçĕнчи Лохвица МТС-ĕн коллективĕ Пĕтĕм Союзри ăмăртăва пуçарса яма чĕнсе çырнине тата Чăваш республикинчи хуçалăх работникĕсен канашлăвĕ чĕнсе илнине сӳтсе-явнă.

Трактористсемпе трактористкăсем, комбайнерсемпе машинистсем Чăваш республики 25 çул тултарас умĕнхи ăмăртăва хутшăнса çĕнĕ çитĕнӳсем тума обязательствăсем илчĕç. Трактористсем кашни 15 лаша вăйлĕ тракторпа вăтамран 350 гектартан кая мар сухалама, комбайнерсем кашни комбайнпа 140 гектар вырса пухма, машинистсем трактормпа ĕçлекен кашни молотилкăпа 450 тонна тĕштырă сапма йышăнчĕç.

А. ЛАВРЕНТЬЕВ.
Куславкка МТС директорĕ.

Çĕрулми вăрлăх участокĕ

МУРКАШ, апрелĕн 19-мĕшĕ. (Телефонпа). Кашмашри «Свобода» колхоз çĕрулми тухăçлăхне ӳстерме тăрăшать. Çак майпа 4-мĕш бригада çĕрĕ çинче вăрлăхлăх çĕрулми ӳстерсе илмелли участок турăмăр. Кун пек участок пирĕн колхозра халиччен пулман. 3 гектарлă участока иртнĕ кĕркунне 22 сантиметр тарăнăш сухаласа хăвартăмăр. Унта лартмалли çĕрулми вăрлăхне халĕ йăлтах яровизацилесе хутăмăр. Лартнă чухне çĕрулми çине çĕрнĕ тислĕк хураткăр е кĕл сапатпăр.

Ф. СКВОРЦОВ.
Колхоз агрономĕ.

Кĕрхи тырă калчисене çуркунне пăхасси

Иртнĕ çулта Горький облаçĕнчи Богородск районĕнчи «Советская деревня» колхозăн 25 гектар çинчи кĕрхи тулă калчисем юр айĕнчен ытла та иртер тухнă. Колхозниксем çак лаптăка пăсса çĕнĕрен çурхи тырăсем акма шутланă. Анчах та Каменка МТС агрономĕ Ильин юлташ çак ĕçе хутшăннă та тулла, начар пулсан та, пăсмасăр хăварма канаш панă. Колхозниксем агроном сĕнĕвĕпе килĕшнĕ. Ильин юлташ колхозăн агрономĕпе Волков юлташпа кĕрхи тулă калчине çăлса хăварас тĕлĕшпе тумалли ĕçсене палăртнă. Çав ĕçсене колхозниксем лайăх пурнăçланă. Вара çак участокран колхозниксем кашни гектартан 15-тер центнер тулă пухса илнĕ.

Çакă ĕнтĕ кĕрхи тырă калчисене çуркунне лайăх пăхни калама çук пысăк выран йышăнса тăнипе çирĕплетсе парать. Кăçал кĕрхи калчасене пăхас тĕлĕшпе кашни колхозрах пикенсе ĕçлеме тивет. Иртнĕ кĕркунне çанталăк уяр тăнипе пула, нумай колхозсенче кĕрхи тырă калчисем юр айне иммер тата вăйсăр ылчĕç. Çавăнпа та вĕсене кăçал лайăхрах тата ытларах пăхас пулать.

Кĕрхи тырă калчисене халĕ, юр пирĕлĕ вăхăтра, тĕплĕн сăнаса тăмалла.

Ӳйрăмăнах кĕрхи тырă калчисене халĕ пăрлă юр нумай сиен кӳме пултарать. Айлăм вырăнсенче шыв пухăнса тăнипе тăнса ларнă пăр ытла та хăрушă. Ана шăлла катоксемпе çĕмĕрмелле, шăтарса пĕтермелле, е вĕтетнĕ торфпа кăмака хăрăмĕ, кĕл, типĕ тăпра сапмалла, вĕсем пăра е юра хăвăртрах ирĕлтерĕççĕ.

Айлăм вырăнсенче, вăрман хĕррисенче юр хулăм, вăл час ирĕлсе пĕтмест, çакăн пек вырăнта кĕрхи калчасем çĕрсе пĕтме пултараççĕ. Çакăн пек вырăнсенчи юра салатса тăкмалла е, часрах ирĕлтерес тесе, типĕ тăпра, вак торф е кĕл сапас пулать.

Çурхи шыв кӳлленсе тăнипе те кĕрхи калчасем йĕпенсе çерсе пиçĕççĕ. Ун пек чухне шыва канавсем туса уçса ямалла, ун пек тума май пулмасан, айлăм вырăнта шăтăксем алтса, шыва пĕчĕк вырăна пухмалла.

Нӳрлĕх çителĕксĕр вырăнсенче, ӳйрăмăнах тăвайккисенче, çурхи шыва ытларах тытса юлас шутпа, шыв юхакан вырăнта пĕчĕк пĕвесем туса шыв çулне пӳлмелле.

Кĕрхи калчасене апатлантарни тырă тухăçлăхне ӳстерес ĕçре питĕ пысăк вырăн йышăнать. Вăл тырă тухăçлăхне гектар пуçне 5—7 центнера çити ӳстерет. Кĕрхи калчасене апат панă çĕрте выранти удобренисемпе—тислĕк шĕвекĕпе, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕпе, лайăх çĕрнĕ тислĕкпе, кĕлпе, çавăн пекех минерал удобренисемпе те усă курмалла. Кĕрхи калчасене юр кайса пĕтсенех апалантарни лайăх, анчах та удобрение çурхи шыв юхтарса каясран сыхланмалла. Удобренисене пĕр тикĕс сапса туҫас пулать, вăл вара сӳрес вăхăтченех çилте выртать. Тислĕк шĕвекĕ сапса калчасене сӳренĕ кун апатлантарсан питĕ аван.

Кĕле е кайăк-кĕшĕк тислĕкне малтан типĕтсе вĕтетес пулать, унтан кашни гектар çине 5—6 центнер тăкма юрать. Тислĕк шĕвекĕн пĕр пайĕ çине 3—5 пай шыв хутăштарса шĕветес пулать. Çавăн пек шĕвеке вара гектар çине 5—10 тонна сапмалла. Тăпрара хăвăртрах тата лайăхрах ирĕлсе сăрхăнтăр тесе, минерал удобренисене пурне те вĕтетсе тăкмалла.

Кĕрхи калчасене сӳрени те пысăк вырăн йышăнать. Тăпра юр айĕнчен тăкăсланса хытса тухать. Çавăнпа та тăпра ăшне, ӳсен-тăран тымарĕсем патне сывлăш тата шыв та çителĕклĕ пыраймасть. Тăкăсланса хытнă тăпра часах типет те çуркаланма тытăнать, çавна пула ӳсентăран тымарĕсем сиенленеççĕ тата типсе хăраççĕ. Çуркунне калчана сӳрелесен, тăпран çиелти сийĕ кăпкаланать, çамрăк çумкурăкĕсем пĕтеççĕ тата кĕрхи калчасем хăрнă пайĕсенчен тасалаççĕ.

Анчах та сӳремелли вăхăта пĕлсе палăртмалла. Тăпра чĕрĕ, çăрăнса е сыпçăнса пынă вăхăтра е тăпран çиелти сийĕ типсе кайнă хыççăн сӳренин усси çук, вăл сиен кăна кӳрет. Тăпран çиелти чи сӳхе сийĕ типсе çыпçăнми пулсан, ӳсен тăрансем чĕрĕлсе çирĕпленсенех сӳремелле. Лайăх тымар янă тата тĕмĕленнĕ калчасене йывăр сӳресемпе пĕрре е икĕ хут, ретсене урлă сӳрес пулать. Сӳресем сиксе ан пыччăр, тесе, вăрăм турталлă сӳресем кӳлмелле. Калчасене сӳреме лашасем çитмесен, ĕне-вăкăрсемпе усă курмалла е кĕреплесемпе сӳрелессине организацилемелле.

Обязательнăй йĕркепе тумалли агромероприятисен шутне кĕрхи калчасене çумкурăкĕсенчен тасатасси те кĕрет. Кĕрхи калчасене çумлассине иртерех, калчасем кĕпçене кайиччен, çумласа тасатмалла. Çумкурăкĕсене тымарĕпех кăкласа илмелле. Татса çумлани усси сахал, мĕншĕн тесен çумкурăкĕ çĕнĕрен хунавланса ӳсме тытăнать. Ӳйрăмăнах арăмутинчен, писенрен, мăянран тата ытти çавăн пек сиенлĕ çумкурăкĕсенчен лайăх тасатмалла.

Кĕрхи калчасене йĕпенсе, çĕрсе пĕтсерен сыхлас, апатлантарас, сӳрес тата çумлас тĕлĕшпе, бригадăсемпе звеносене халех конкретлă заданисем памалла.

П. ЗАБАЗНЫЙ,
СССР Наркомземĕн производственно-территориальнăй Управленийĕн главнăй агрономĕ.

Кашни колхозрах пĕвесем тума май пур

Чăваш республикинчи ялхуçалăх работникĕсем чĕнсе каланинче, ытти обязательствăсемпе пĕрле, ялсенчи шывсене пĕвелесе, çуркуннехи шывсене тытса хăварма пăхнă. Вăл пĕвесенче хур-кăвакал тата пулă ĕрчетме май пуррине катартнă.

Ял хушшинчи пĕвесем пурри пур енчен те усăллă. Вăл пахча-çимĕçсене шăварас, пулă, хур-кăвакал ĕрчетес тата пушара хирĕç кĕрешес ыйтăва татса парать.

Çаксене шута илсе, Çĕрпӳ районĕнчи Юлаш ял Советне кĕрекен «Элаш», «Парижская Коммуна», «Октябрь» колхозсем ял хушшинче те, уйра та пĕвесем тума йышăнчĕç. Унченхи пĕвесене çирĕплетеççĕ тата çĕнĕрен те пĕвеле мутлаççĕ. Ял Советĕнчи кашни колхозрах шыв тытса хăварма, çырмасене пĕвелеме çынсем уйăрнă тата пĕвеленĕ çĕрте кирлĕ пулакан япаласене те хатĕрлеççĕ.

Е. АРХИПОВ.
Çĕрпӳ районĕнчи Юлаш ял Совечĕн председателĕ.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, апрелĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйăсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: апрелĕн 15-мĕшĕнче союзниксен çарĕсене тата 66.000 нимĕç салтакĕпе офицерĕ тытăкăна парăннă. Пĕлтерӳре каланă тăрăх, союзниксен танкĕсем, Аллер шывĕ çинчи укрепленисем патĕнчен наступлени пуçласа ярса, 24 километра яхăн малалла кайнă. Эльба шывĕн хĕвеланăç хĕрри Виттенберг хулинчен пуçласа Эльба шывĕпе Заале шывĕ пĕрлешнĕ вырăна çитиччен халĕ пĕтĕмĕшпех союзниксен аллинче, тăшман аллинче хирĕç тăмалли хăшпĕр пĕчĕк узелсем кăна тăрса юлнă. Ку районран кăнтăртарахра союзниксен танковăй чăçĕсем 37 километр малалла кайнă та Хемниц хулинчен çурçĕртерехре вырăнтакан района пырса тухнă.

Франкин хĕвеланăç сыранĕнче союзниксем Руаян хулине йышăннă.

ЛОНДОН, апрелĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйăсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: Гамбург хулинчен кăнтăртарахра союзниксен танковăй чăçĕсем, Люнебург шурăхĕсем урлă каçса, Ильцен хулинчен иртсе кайнă.

Артиллерирен персе тата бомбăсем пăрахса хатĕрленĕ хыççăн союзниксен пехотипе танковăй чăçĕсем Магдебург хулине штурмлама пуçланă.

Дессау хулинче урамсенче çапăçаççĕ. Вăл çапăçусене Германи çарĕсемпе пĕрле гражданла халăх та хутшăннă.

Хемниц хулинчи немĕç гарнизонĕн командирĕ паранма хушнине йышăнман. Союзниксем çав хуларан 3 километр хĕвеланăçнерехре тăраççĕ.

Нюрнберг хулине союзниксен çарĕсем пĕтĕмĕшпех тенĕ пек хупăрласа илнĕ. Хула хĕрринче немĕçсем вăйлăн хирĕç тăрса çапăçаççĕ.

Рур «миххинче» немĕçссне Дюссельдорф районĕнчи 300 тăваткăл километр йышăнса тăракан плацдарм çине хĕссе кăларнă.

Апрелĕн 16-мĕшĕнче 112.033 çынна тыткăна илнĕ.

Атлантика тинĕсĕ хĕрринче тăшманăн Руаян «миххинчи» хĕçпăшаллă вăйăсен командующине немĕç адмиралне унăн штабĕпе пĕрлех тыткăна илнĕ.

ЛОНДОН, апрелĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйăсен штабĕн апрелĕн 17-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерĕвĕнче каланă тăрăх, Италири 8-мĕш армин сылтăм флангĕнче акăлчансен чаçĕсем Арджента хулинчен иртсе кайнă.

Имолăпа Болонья хушшинчи шоссе сулĕнчен çурçĕртерехре союзниксен çарĕсем наступлени туса пыраççĕ.

Çĕнĕ Зеланди çарĕсем хăйсен сулахай флангĕнче Болоньăпа Луго хушшинчи çул çинче Болонья хулинчен 14 милльăра ларакан Медичина хулине тытса илнĕ çарсемпе пĕрлешнĕ.

Фронтăн вăтаçĕрти секторĕн ытти участокĕсенче союзниксен çарĕсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере, наступлени туса пыраççĕ.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, американецсен 750 йывăр бомбардировщикĕ ытла ĕнер кăнтăрла Кăнтăр Германири чугун çул объекчĕсене тапăннă. Бомбардировщиксене 850 истребитель ытла хӳтĕлесе пынă.

ЛОНДОН, апрелĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 17-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле союзниксен авиацийĕн пысăк соединенийĕсем тăшманăн чугун çул объекчĕсене, пуринчен ытла Германине Чехословаки чикки таврашĕнчи объекчĕсене, тапăннă. Берлин хули çине те бомбăсем пăрахнă.

Югославири çапăçусем

БЕЛГРАД, апрелĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Югослави çарĕн генеральнăй штабĕ çапла пĕлтерет: хаярăн çапăçнă хыççăн Югослави çарĕсем Сремра çĕмĕрсе тăкнă немĕç чаçĕсен юлашкийĕсене пĕтерсе тăкнă. Ку обласра вăрçă ĕçĕсем пĕтнĕ. Трофейсем нумай тытса илнĕ.

Босна шывĕ улăхĕнче çаплах ăнăçлă наступлени пырать.

Хорват Приморьинче Югослави чаçĕсем, Югославин тинĕс-çар флочĕн вăйăсемпе пĕрле çапăçса, нумай утравсене прĕке кăларнă.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ АРГЕНТИНĂРА ТАТА ШВЕЙЦАРИРЕ ПИТЕ НУМАЙ УКÇА ПЫТАРАССĔ

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). (Вăхăтра çитереймен). «Кольерс» журналра Стэнли Росс статьине пичетлесе кăларнă. Статьяра каланă тăрăх, Германин фашистла лидерĕсем юлашки çулсенче Испани урлă тата Швейцари банкĕсем урлă Аргентинăна пит нумай укçа куçарнă.

Росс пĕлтернĕ тăрăх, 1943 çулта Аргентинăра пулса иртнĕ çар переворотне ертсе пынă Раусон генерал пĕр çулталăк каярах çапла каланă: немĕç фашисчĕсем Аргентинăра 750 миллион доллар укçа пытарнă. Росс каланă тăрăх, унта куçарнă укçа хальхи вăхăтра икĕ хут ӳснĕ пулмалла.

Дипломатиллĕ ушкăнсенчен тата ытти вырăнсенчен илнĕ хыпарсем тăрăх, Росс çапла калать: Геринг укçи Аргентинăра 25 миллион доллара çитет. Геринг «Сосьеда Электро-металурхика Аргентина» фирмин çар заводне Аргентина правительствине 5 миллион доллара сутни паллă пулнă. Росс каланă тăрăх, малтан куçарнă укçасăр пуçне, Геббельс Буэнос-Айреси банка нумаях пулмасть 2 миллион доллара яхăн укçа куçарнă, Риббентроп—10 миллион доллар. Гитлеровецсен «ĕç фрончĕ» текен организацин лидерĕ Лей Бапа-Бланка сывăхĕнче пысăк имени илнĕ.

Росс каланă тăрăх, январĕн 22-мĕшĕнче Гиммлер уйăм сырура нацистла гаулейтерсене тата нацистсен ытти лидерĕсене ют çĕршывсене ятларласа панă ĕçпе ярасси çинчен пĕлтернĕ. Февралĕн 7-мĕшĕпе 8-мĕшĕнче вара 345 паллă нациста Германирен тухса кайма приказ панă. Вĕсенчен нумайĕшĕ, Росс каланă тăрăх, Аргентинăна пырса çитнĕ те ĕнтĕ. Росс çапла пĕлтерет: Панамăра та нацистсен пит пысăк фондсем пур, тет.

Росс пĕлтернĕ тăрăх, Базельри (Швейцари) пĕр банкра кăна нацистсен 2.000 вкладчикĕ ытла шутланать (нацистсен компанийĕсем, картелĕсем тата уйăм çыннисем). Çав банкăн директорĕ Нуссбаумер Итали фашисчĕсемпе çирĕппĕн çыхăнса тăрать.

ТРУМЭН ПРЕСС-КОНФЕРЕНЦИРЕ ТУХСА КАЛАНИ

ВАШИНГТОН, апрелĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС) Пĕрремĕш пресс-конференцире пичет представителĕсем панă ыйтусем çинчен ответлесе. Трумэн президент çапла каланă: сывăхри вăхăтрах Сталинпа, Черчильпе тата Чан Кай-шипе тĕл пулсан лайăх пулĕччĕ, тенĕ. Анчах та, Трумэн каланă тăрăх, союзла çĕршывсен лидерĕсемпе тĕл пулас тĕлĕшпе вăл нимĕнле утăм та туман-ха. Трумэн çапла хушса хунă: де Голль маннă тĕл пулассине организацилес пулсан, эпĕ унпа савăнсах тĕл пулăттăм, тенĕ.

Корреспондент Трумэна çапла ыйту панă: Сан-Франциско хулинчи конференцин уçăличчен вăл Молотовпа тĕл пулма ĕмĕтленет-и?—тенĕ. Трумэн çапла ответленĕ: Молотов Вашингтонра чарăнать, вăл Пĕрлешӳллĕ Штатсен президенчĕ патне килсе каять, тенĕ.

Ытти ыйтусем çине ответлесе Трумэн çапла каланă: эпĕ Сан-Франциско хулинчи конференцире пулмастăп, анчах та конференцие çыру яратăп тата делегатсене радио тăрăх саламлатăп пулмалла. Сан-Франциско хулине мĕншĕн кайманни çинчен ыйтсан, Трумэн çапла ответленĕ: Пĕрлешӳллĕ Штатсен тивĕçлĕ делегацийĕ пур, вăл делегацие Шурă Çурт пулăшса тăрĕ, тенĕ.

Хăшпĕр ыйтусем çине эпĕ мĕнле пăхни çинчен, пуринчен ытла Бреттон-Вудсра тунă сĕнӳсем çине мĕнле пăхни çинчен тепĕр хут ыйтаççĕ, тесе пĕлтерсе, Трумэн çапла каланă: Бреттон-Вудсра йышăннă программăпа йăлтах килĕшетĕп, сенатра юлнă пулсан, эпĕ ăна Бреттон-Вудри программăна йышăнтарма тăрăшнă пулăттăм, тенĕ.

Тариф енчен пĕрне-пĕри çăмăллăхсем парса суту-илӳ договорĕсем тăвас тĕлĕшпе Рузвельт программине ырлатăр-и? тесе ыйтсан, Трумэн вăл программăпа килĕшни çинчен пĕлтернĕ, эпĕ çаван пек программăна яланах пулăшса тăнă, тенĕ.

Негр-корреспондент Трумэна негрсене хирĕç пыракан, вĕсене ытти халăхсемпе танмар тăвакан налога пăрахăç кăларасси çине мĕнле пăхни çинчен ыйту панă. Трумэн çапла ответленĕ: сенатор пулнă чухне эпĕ негрсенчен илмелли налога пăрахăçласси çинчен калакан закона тата негр рабочийĕсене хур тăвакан йĕркесене пăрахăç кăлармалли мероприятисене кăмăллаттăмчĕ, тенĕ.

ФИНЛЯНДИРЕ ÇĔНĔ ПРАВИТЕЛЬСТВО ТУСА ХУНА

ХЕЛЬСИНКИ, апрелĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Финляндире çĕнĕ правительство туса хуни çинчен официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ. Правительствăна çаксем кĕнĕ: премьер-министр Паасикиви, премьер-министрăн заместителĕ тата оборона министрĕ Пеккала, шалти ĕçсен министрĕ Лейно, ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Энкель, ют çĕршыв ĕçĕсен иккĕмĕш министрĕ Свенто тата ытти çитмесен те.

Правительствăна халь, иртнĕ вăхăтрипе танлаштарсан, виçĕ çĕнĕ министр кăна кĕнĕ.

Финляндин çĕнĕ правительствинче Финлянди халăхĕн демократиллĕ союзĕн представителĕсем—6, социал-демократсен партийĕн представителĕсем—4, аграрнăй партин представителĕсем — 4, Швецин халăх партийĕн пĕр представителĕ тата прогрессивнăй партин пĕр представителĕ пур.

ЧĂЛАПКА ОКЕАН ÇИНЧИ ВАРÇА

ВАШИНГТОН, апрелĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 12-мĕшĕпе 15-мĕшĕ хушшинче Америкăн авианосецсем çинчи самолечĕсем Кюсю тата Рюкю утравĕсене тапăннă. Вăхăтра японецсен 368 самолетне пĕтерсе тăкнă, 60 самолетне сиенленĕ. Америка çарĕсем Окинава утравĕнчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехри Иесима утравĕ çине аннă та унти аэродрома тытса илнĕ.

Апрелĕн 16-мĕшĕнче американецсен Марианă утравĕсем çинчи «Вĕçекен крепость» йышши вăйăпаран та вăйлă бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем Кюсю утравне (Япони) тапăннă.

КĔСКЕН

▲ Пиммĕсен Рур «миххинче» пулнă фельдмаршалĕ фон Модель хăйне хăй вĕлернĕ.

▲ Париж хулинче «Урал—Хĕрлĕ Çар арсеналĕ» ятлă выставка уçăлнă.

Ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн депутачĕсене пĕлсе тăма

Апрелĕн 23-мĕшĕнче, каçхине 7 сехет тĕ 30 минутра, Парткабинет çуртĕнче (Ленинградски урам, 1) ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн 30-мĕш сессийĕ уçăлать.

Сессире çак ыйтăва сӳтсе-явмалла: «Хула халăхне медицина енчен пулăшас ĕçе лайăхлатасси çинчен». Докладчик — ĕççынни депутачĕсен хула Совет Исполкомĕн председателĕ П. И. Аникин юлташ.

Шупашкар хула Совечĕн депутачĕсем сессие хăйсен удостоверенийĕсемпе кĕреççĕ.

Ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн Исполкомĕ.

Районри хаçатсен чĕлхи çинчен

Пирĕн пичет коммунистсен партийĕ халиччи вăйлă хĕçпăшал пулса тăрать. Пирĕн хаçатсен хамăр партин шухăшĕсене, лозунгĕсене, решенийĕсене анлă массăсем патне çитермелле, çав решенисене пурнăçлама массăсене мобилизацилемелле, халăхи вăхăтра тăшмана аркатса тăкмашкăн хамăр Хĕрлĕ Çара пĕтĕм вăйпа пулăшас ĕçе организацилемелле.

Çак задачăна ăнăçлăрах пурнăçламашкăн хаçатсене ăнланмалла, витĕмлĕ чĕлхепе çырса тăмалла.

Хаçатсенче, паллах ĕнтĕ, çакăн пек ăнланмалла мар предложенисем пулмалла мар:

«Çавăнпа та крахмал завочĕсенче обязательство поставки шучĕпе илекен «лорх» çĕрулми çинчи 15 процентран малалла кашни ӳсекен крахмал процинчĕшĕн, 7 процент чухлĕ çĕрулми хушса шутласа парса залани хисеплĕ кĕртеççĕ». («Коммунизм ялавĕ» хаçат).

Районри хаçатсем нумайĕшĕ ăнланмалла чĕлхепе, хальхи вăхăтри литературă чĕлхипе çырса тăраççĕ. Анчах та чылай хаçатсенче грамматикăпа стилистика пăнăмĕсем сахал мар тĕл пулаççĕ-ха.

1. Предложенири сăмахсен çыхăнăвĕ. Предложенире сăмахсем пĕр-пĕринпе тĕрĕс çыхăнса тăмалла. Пĕр-пĕр шухăша пĕлтерекен сăмахсене мĕнле çыхăнтарса мĕнле формăпа çырмаллине ыйту парса пĕлме пулать.

Илер пример. «Халĕ ĕу вăкăра лаша вырăнче усă курассĕ», тесе çырнă «Çĕнтерӳ çулĕ» хаçатра январĕн 18-мĕшĕнче. Тĕрĕс-и вăл? Паллах, тĕрĕс мар. Чăвашла мĕне усă курассĕ? темеççĕ. мĕнпе усă курассĕ? теççĕ. Çавăнпа та вăнкарпа тесе çырмалла пулнă.

Çак тĕслĕхсенче, акă, хура саспаллисемпе наборланă сăмахсем форми вырăнне вĕсен скобкăра кăтартнă формине çырмалла пулнă:

«Социализмлă ăмăртупа кулленех ертсе пыни». («Колхозник ялавĕ». Мĕнпе ертсе пырать мар, мĕне ертсе пырать?—Ăмăртăва, темелле пулнă). «Яровизацилене вăрлăхпа акрĕ». («Ударник». Мĕн акрĕ?—Вăрлăх). «Ытти предметсемпе те отлично вĕренет». («Социализмлă ĕç». Мĕнпе мар, мĕне вĕренет?—Предметсене те, темелле пулнă). «Курс витĕр 10 çын вĕренсе тухнă». («Коммунизм сулĕпе»—Курсран).

2. Глагол формипе çырмалли сăмахсене глаголтан пулнă япала ячĕ формипе çырни. Сăмахран, «тырпула пĕр тăккаламасăр пухса кĕртер» тесе çырас вырăнне хăшĕ «тырпула пухса кĕртессине пĕр тăкаксăр туса ирттерер» тесе çырассĕ. Çапла вара, «кĕртер» (глагол) вырăнне «кĕртесси» (глаголтан пулнă япала ячĕ) пулса тăрать, «пĕр тăккаламасăр» (деепричасти) вырăнне «тăкаксăр» (япала ячĕ) пулса тăрать.

Çакăн пек çырасси чылай хаçатсенче сарăлнă. Çавăн пек çырнине пула, предложенире сăмахсем йышăланса каяççĕ, предложени шухăшĕ пĕтĕмĕшленсе каять, чĕлхе хăй канцеляри чĕлхи пекрех пулса каять тата хăш чухне чăвашла мар предложенисем пулса каяççĕ.

«Апат çирĕмĕр» тесе çырас вырăнне, чăнах та ĕнтĕ, «Апат çиессине туса ирттертĕмĕр» тесе çырма нимĕнле сăлтав та çук.

Çак тĕслĕхсенче, акă, хура саспаллисемпе наборланă сăмахсем вырăнне скобкăра кăтартнă сăмахсене çырмалла пулнă:

«Çуракине хатĕрленес ĕçе тытăнманха». («Çĕнтерӳ çулĕ».—Хатĕрленме). «Суртыррисем вырас ĕç пырать». («Хĕрлĕ Октябрь».—Вырассĕ). «Улăхри утта çулас ĕçе вĕçленĕ». («Колхозник сасси».—Сулса пĕтернĕ). «Вăкăрсемпе, ĕнесемпе ĕçлессине халех тытăнмалла». («Социализмлă ĕç».—Ĕçлеме). «Кăнтăрлахи апат вăхăтĕнче пехсенче хаçатсем вуласси, калаçусем, Хĕвеланăç Европа краттипе паллашасси пулса иртеççĕ». (Хĕрлĕ Ялав».—Хаçатсем вуласçĕ, калаçусем иртеççĕ. Хĕвеланăç Европа карттипе паллашасçĕ). «Тепĕр 14 кунтан пуçламĕш шкулсенче вĕренӳ ĕçĕсем пуçланмалла». («Колхоз пурнăçĕ».—Вĕрентме пуçламалла). «2-мĕш бригада уйĕнче нихăçанхинчен те пысăкрах тăрăшу». («Социализм сулĕпе».—Вăйлăрах тăрăшасçĕ). «Лаборатори тĕрĕслевĕ витĕр кăларса». («Коммунар». — Лабораторире тĕрĕслеттерсе). «Комисси тĕрĕслев туса ирттерет». («Колхозник юлташĕ».—Тĕрĕслет).

3. Ытлашши сăмахсем. Çырнă чухне çак правилăна ялан асра тытса тăрас пулать: сăмахĕ сахалтарах пултăр—шухăшĕ ытларах пултăр, урăхла каласан: пĕр-пĕр шухăша сахалтарах сăмахпа каласа пама тăрăшас пулать. «Уйăхлăха лайăх ирттерчĕç» тесе çырас вырăнне «Уйăхлăха паха тĕслĕхсемпе тата пысăк пахалăхпа ирттерчĕç» («Ленин сулĕпе»), тесе çырни предложение кирлĕ мар çĕртен тăсса кайни пулать, мĕншĕн тесен «паха тĕслĕхсемпе» тата «пысăк пахалăхпа» тени иккĕшĕ те пĕр япаланах пĕлтереççĕ («хитре тата илемлĕ» тенĕ пек), тепĕр енчен, çав пилĕк сăмах «лайăх» тесе пĕр сăмахпа каланă шухăшран пуçне урăх ниме те пĕлтермеççĕ, çав шухăша пуянлатмассĕ. Шухăша пуянлатман сăмахсем ытлашши сăмахсем пулса тăраççĕ, вĕсене пĕр шеллемесĕр кăларса пăрахас пулать.

Çак тĕслĕхсенче, акă, хура саспаллисемпе наборланă сăмахсем ытлашши сăмахсем пулса тăраççĕ:

«Колхозсем утă парас поставкăна сĕр процентĕпех парса татрĕç». («Колхозник сасси»). «Лайăх тата пысăк пахалăхпа пухса кĕртнĕ». («Колхозник юлташĕ»). «Плана тулларасси... çителĕксĕр кайри вырăнта тăрать». («Колхозник хаçачĕ»). «Кун пек лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлекенсем». («Октябрь ялавĕ»). «Начар тупăшлă ӳснĕ». («Коммунизм ялавĕ»). «Колхозниксем хăйсем çине çакăн пек обязательство илчĕç». («Колхозник сасси»). «Литература предмечĕпе вĕрентет». («Колхоз хаçачĕ»). «Лайăх пахалăхпа вĕренеççĕ». («Октябрь ялавĕ»). «Пирĕн колхозра 35 пуç сысна пур». («Коммунизм байраги»). «Нимĕнле хуснанулла ĕç те туман». («Коммунизм сулĕпе»).

4. Ӳйрăм сăмахсене вырăнсăр çырни. Юлашки вăхăтра пирĕн хăшпĕр хаçатсем «паха, пахалăх, тухăçлăх, вырăн» тата çавăн пек ытти сăмахсене кирлĕ-кирлĕ мар çĕртех нумай çырма пуçларĕç. Хăшĕ «пысăк пахалăхлăн» тесе те çырассĕ (чăвашла ун пек çырма май килмест, мĕншĕн тесен «пысăк» сăмах наречи определенийĕ пулма пултараймасть).

Çак тĕслĕхсенче, акă, хура саспаллисемпе наборланă сăмахсем вырăнне скобкăра кăтартнă сăмахсене çырмалла пулнă:

«Килес çулта пуян тырпул туса илмелле». («Колхоз пурнăçĕ».—Вăйлă). «Ачасене пысăк ӳсĕмсемпе вĕренме чĕнчĕç». («Çĕнтерӳ çулĕ». — Лайăх). «Кăсал тата тупăшлăрах тырпул туса илчĕ». («Çĕнтерӳ çулĕ».—Вăйлăрах). «Комсомол ĕçне çӳллĕ вырăна!» («Сталинец».—Лайăхлатар). «Ĕç дисциплинин аялти вырăнта тăрать». («Ленин ялаçĕ».—Сӳрĕк). «Вĕренĕве çӳллĕ пусăма лартмалла». («Сталинец».—«Вĕренĕве лайăхлатмалла»).

«Комсомола илнĕ» тес вырăнне хăшĕ—«Комсомол ретне илнĕ», теççĕ, «Комсомол ретне явăçтарнă (е хутшăнтарнă)», теççĕ. «Хĕрлĕ Çара кайнă» тес вырăнне хăшĕ «Хĕрлĕ Çар ретне кайнă», тесе çыраççĕ.

5. Предложенири пĕр йышши членсем. Колхоз, ялсовет, райсовет ячĕсене тата скобкăра çав организацисен председателĕсен хушамачĕсене çырса кайнă чухне нумайĕшĕ çак формăпа çыраççĕ:

«Анчах Карл Маркс ячĕпе тăракан (председателĕ Матвеев юлташ), «Комбинат» (председателĕ Николаев юлташ), Коминтерн ячĕпе тăракан (Гурьянов юлташ), «Радио» (Григорьев юлташ) колхозсем вырăнти удобренисене тăкмаççĕ». («Хĕрлĕ Ялав»).

Капла çырсан, мĕнле учрежденин председателĕ иккенне вĕçне çитиччен те пĕлме çук. Юлашки икĕ çын çинчен вара председатель тесе те каламан, тăкамсем вĕсем. Çакăн пек предложенире кашни определени хыççăн учреждени, е организаци, е хуçалăх ятне лартмалла (кунта —«колхоз» тенĕ сăмаха лартса тухмалла): «Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз (председ